33-120

Мĕтри Ваçлейĕ

# ӲРĔКЛĔҪ

ОҪҪĔРК

ҪĂВАШИСТАТ
1933 ШУПАШКАР

Мĕтри Ваçлейĕ

# «ИРĔКЛĔХ»

ОЧЕРК

ХУТ САХАЛ ПĔЛЕКЕНСЕМ ВАЛЛИ

Чăвашсен Патшалăх Истаттĕлстви
Шупашкар 1933

Отпечатано в типографии № 1
Чувашгиза, г. Чебоксары,
Канашская, 16.

„Нет больше возврата к старому. Кулачество обречено и будет ликвидировано. Остается лишь один путь, путь колхозов. А путь колхозов не есть уже путь неизвестный и неизведанный. Он изведан и проверен на тысячи ладов самими крестьянскими массами. Изведан и оценен, как новое, дающее крестьянам освобождение от кулацкой кабалы, от нужды, от темноты".

И. СТАЛИН.

Пĕҫĕк усрав вăрманĕ ҫуммĕн иртсе тухсассăн шăркаланса ларакан „Ирĕклĕх" комунăн ыраш пуссине кĕрсе карăмăр. Мăкăрланаҫ ыраш пусси.

— Мĕн хăйамаҫĕ, тусани ку?—тет ман йулташ, Мускав шурналисĕ.

— Тусан мар вăл, тусан пулсан ҫакăн пек тутлă шăрш кĕмĕҫҫĕ, ыраш шăрки вăл, терĕ

ӑна пирӗн лавӑç, пасартан таврӑнакан колхоçнӗк.

Ыраш шӑркана ларатӑ. Хулӑм кунти ыраш. Иртсе пыракан пӗҫҫен хуçалӑхри хресҫене кӗвӗçтерет пулас кунти комунӑн селӗм ырашӗ.

— Ха, антрамастӑ ку комунӑн тырри. Питех пулакан марҫҫӗçке вӗсен тыррисем,—тет кулкаласа урапа хыççӑн ҫӗриклатакан мӑн атӑпа утса пыракан хура çӗнӗ сӑкманлӑскер, лутра, мӑн сухаллӑ çын.

— Питех пулакан марҫҫӗçке темелле мар, пирӗн йалти колхосӑн та аван пулҫӗ кӑçал ыраш,—хирӗçлерӗ мӑн сухаллӑ çынна колхоçнӗк.—Ку комунӑ тахçантанпах ӗçлет те, çӗре йусаса çитерҫӗç çав вӗсем. Кашни çул темӗскер çӑнӑхӗ сапаççӗ те... Ирхи çӗртме вӗсен... вӑл усӑллах пулас çав, лайӑх, лайӑх, аван кунти тырӑсем, пӑхха ара, авкаланса, хумханса çеç лараççӗ!

— 1921-мӗш çултанпах, 20-мӗш çултах пуçланма тытӑннҫӗ никак ку комунӑ...—Ӑнта-а-а!— тесе калаçса пыраççӗ икӗ лавӑç, Шупашкар пасарӗнҫен таврӑнаканскерсем. Пӗри çатан урапа ларҫӑкӗ çинҫе кашласа ларакан ыраш

йенелле çавăрăнса ларнă та, пăхса пырать. Теприсем çурран утса пыраççĕ. Пурте комунă пусси çинчен калаçу пуçларăмăр. Кашни интересленеççĕ комунă тыррипе...

Мăк сухаллă хура çын каланипе килĕшмерĕ. Колхоссен тырри лайăхрах пулат тенине хирĕç тем те тупса калама пуçларĕ.

— Лайăх çĕре касса илеççĕ те, паллах аван пулать, тăпраран тунă „фосфорит" текен тăпра ăçтан çемçеттĕр тăпранах, ĕлĕкхи тислĕк сĕткенĕ çав, йал çумнерех касса илеççĕ те, тесе каласа хучĕ.

Йамшăкпа тепĕр пĕрле утса пыракан çын çирĕпĕнтерехех каласа хучĕç çав мăк сухаллăскерне. Вăл та колхоçнĕк иккен. Хăйсен колхосĕ йепле хытă çĕрех фосфоритпа çемçетни çинчен йатлаçса каланă пек каласа пачĕ мăк сухала.

Епĕр йулташпа иксĕмĕр те фосфорит чăн та çĕре çемçетме пултарни çинчен калама пуçласан мăк сухал пасартан таврăнакансене елеклеме пăрахрĕ. Лăпланчĕ. Ыттисем те урăххи çинчен калаçма пуçларĕç.

Çĕрпӳ йенчен хура çăмăр пĕлĕчĕ хăпара пуçларĕ. Аслати те хуллентереххĕн хăлтăр-

татаҡ. Нӑйлатакан ӳпресем тухрӗҫ.—Ҫӑмӑр пулаҡ пулмалла-ха, ӳпресем тухрӗҫ, нӑйлатаҫҫӗ, ђуптарас пуљ,—тет йамшӑк.

Утса пынӑ май мӑк сухаллӑ ҫын кам иккенне ҫӗтӗкрех сӑхманлӑ ҫынтан ыйтса пӗлтӗмӗр.

— Ара, калаҫнинђенех пӗлмелле, лишшенсӑ мари, „Кӑшар-кассисем“—тесе хуђӗ пире хирӗҫ вӑл.

— Ҫавӑн пекки пулӗ терӗмӗр ҫав епӗр те...

— Ӑҫта ҫитнӗ унта сӑмах сараҫҫӗ ҫав вӗсем. Ӑҫта есӗр, комуна кайаттӑр пуљ, унта курма та нумай килеҫҫӗ те...

— Ҫавӑнта,—ҫавӑнта...

— Епӗ те унта ыран пыратӑп-ха, ыран калаҫӑпӑр,—тесе калаҫкаласа уйӑрӑлтӑмӑр ҫӗтӗкрех сӑхманлӑскерпе.

Авкаланаҡ ыраш, хумханаҡ. Ҫӗре ҫитсе ђуп тума тӑрӑшаҡ пуђах, анђах нимпе те ҫитеймест. Куҫа уйӑрас килмест тыр ҫинђен.

Ҫӑмӑр ӳккелеме пуҫларӗ.

— Йурттарас пуљ,—терӗ йамшӑк тепӗр хут.

Ҫӗлен пек авкаланса пуҫа ывӑтса пыракан лашасене пӗрре туртса йарсассӑнах ыраш

хушшинҫен тухса ҫёркуҫҫи ҫӳллёш симёс сёлё пуссипе лутра та пёҫёк вăрмана кёрсе карăмăр.

Вăрманта комун лашисемпе ёнисем ҫӳресҫё. Минтер пек ёнисен ҫиллисем. Пуклак мăйракаллă ёнесем те тёл пулаҫҫё. Курăк ҫисе тăраннă та, хăшё пёр ёни пирён йенелле шăтарасла пăхса тăраҫҫё.

Акă „Ирёклёх" йатлă комунă.

Йар-р-р! Уҫăлса карё „Ирёклёх" хапхи.

Хапхаран кёрсенех ҫӳллё тампă тăрăх уттарса пымалла. Пилёк ҫалăш ҫӳллёш ытла пулё вăл.

Тампă мар вăл—пёве умё. Пысăк пёве умё. Пёве хыҫё кёҫҫе пек ҫеремпе кёҫеленсе ларнă. Унтах йăвăҫсем лараҫҫё. Йăмрасем нумайтарах. Патмар тураттисене ҫулҫисемпе илемлетнё те, пёве ҫинелле усса антарнă.

Ҫӳлё лаша пёкки перённипе урапа ҫине вăлҫтăр-вăлҫтăр йăмра ҫулҫисем вёҫе-вёҫе анҫёҫ.

— Кинора аллейă тăрăх ҫӳренине курнă пекех туйанса карё,—тет ман йулташ.

Кулкалатпăр илемлёх ҫине пăхса савăннипе.

— Кунта малтанах пёр йăмра та пулман, ҫырма кăна йăтăнса выртнă, пирён комунă

кунта куçсанах икĕ пĕве тунă, йăвăçсем лартнă, вăт халь—аван,—терĕ пĕр пĕчĕкрех ачи.

Сăмах хыççăн сăмах пуçланса карĕ.

Комунă ачисем пĕвере пулă тытаççĕ. Платник турпасси пекех хăш карас пулăсем—400—500 крам туртаканнисем пур, терĕ пулă тытаканĕ.

Тепĕр пĕвийĕ сат хĕрринче. Пĕве пек мар, вăл—кӳлĕ. Ăна 1926-мĕш çултах туса пĕтернĕ те, ун тавралла та йăлтах çерем тапса илнĕ.

Шывра кимĕпе икĕ ача çатта çарамассăн йарăнса çӳреççĕ. Выльаççĕ хăйсем шывпа. Пулăсем выльанă пекех туйăнаť вĕсем выльани.

— Вăт пурнăç вĕсен!—тет колхоссойуçран килнĕ йулташ.

— Пулă пекех шывра пурнаççĕ çав вĕсем çăва тухсан, пионер отречĕпе килеççĕ шыва кĕме,—тет Йефимăв, комун правленин членĕ.

— А, пуллисем пури кунта?

— Пур та, вĕтĕреххисем кăна.

— 1926-мĕш çултах йанă та ĕрчемерĕç. Кайран каллех 250 сасан йанăччĕ, халĕ те çук.

— Шывĕ килĕшмест пулĕ?

— Кам пĕлет...

Ку вырăнта та пĕве тума тытăнаҫҫен тăтăш ҫĕр йăтăнса выртнă. Пĕве туса лартман пулсан, йăвăҫсем лартман пулсан, хаҫхи сат вырăнĕнҫе хĕрлĕ ҫăнкăр кăна катаран тискеррĕн курăнса тăмалла пулнă. Халĕ унта сат ҫитĕнет. 100 ытла улмуҫҫи лартнă. Ытти пахҫа йăвăҫҫисем те пур.

Йунашарах пĕҫĕк те лутра илемлĕ вăрман. Пĕве леш йенҫе ҫуртырри кашласа ларать.

Сăртарах хăпарса улмуҫҫисемпе пĕве ҫине пăхса савăнса тăратăн!

Сат витĕр тухсассăнах комун килкартине кĕрсе кайатăн.

Унта ҫи малтанах карташ тулли ҫĕпĕ ҫӳрени курăнать. 200 ҫĕппе йахăн пулĕ шипĕлтетеҫҫĕ.

— Татах нумайҫҫĕ вĕсем пирĕн. Йĕке хӳресем сахаллатса хăварҫĕҫ. Пĕр каҫхине хĕрĕх ҫĕпĕ илсе кайрĕҫ. Нимпе те ҫарма май килмерĕ, терĕ ҫĕп пăхакан аҫа.

Ҫирĕмпилĕк ҫĕп «Хĕрлĕ хресҫен» колхоса сутнă. Алăсемпе тытса пăхмасăр ҫăтаймарăмăр ку ҫĕпсене.

Алла тытсассăн тата шиплетмеҫҫĕ вĕсем.

Алла вĕреннĕ пулмалла амăшсĕрскерсем. Тĕрлĕрен ăратлă пулас: хăшĕ вăрăм ура туниллĕ, хăшĕ уйрăмăнах вăрăм мăйлă, хăшĕн урисем çинçе те, çăмлă.

Ку тĕслĕ вĕтĕр-шакăртан тепĕр тĕслĕ вĕтĕр-шакăрсем патне куçрăмăр. Ку — йаçлĕ ађисем. Умĕсем хĕрлĕ çăлтăрлă комун ађисем пусма вĕçĕнђе выљаса лараççĕ. Нумайах пулмасť ђăваш йалĕнђи ĕçхресђен ађисем урам витĕр шăнкăравпа йут çынсем иртсе пынине курсассăн, йе хăйсен килне палламан вырăсла тумланнă çын пынине туйсассăн, йĕре-йĕрех ампар айне тарса кĕнĕ. Паллах, шăнкăравпа йала пырса кĕрекен пурин ађисемшĕн те йĕртмеллле пулман. Теприн ађисемшĕн хĕпĕртемелле те пулнă. Вĕсен ађисем йĕрсе тарса кĕме мар, хирĕç ђупса тухнă. Хирĕç тухнăшăн шушкă, йе премĕк-канфеткă, йе укçа илнĕ. Вĕсен ашшĕсем „аслă çынсем“, „ăслă çынсем“: старăстăсем, старшшинасем, уретнĕксем, арман хуçисем пулнă. Çавăнпа та „ăслă“ пулнă мĕн.

Ђухăн хресђен ађин тăраниђђен çиме çăкăрĕ те пулман. Ђухăн хресђен аđи ним сăлтавсăрах йĕрсе тарса кĕме вĕренмен ун

ђух. Вăл, старшшинапа уретнĕк мĕншĕн ашшĕ патне килнине, килсессĕн ашшĕне куланай тӳлейменшĕн (куланайнех пĕлеймен пулсан та, ашшĕнђен укçа-тенкĕ илесшĕн хĕненине) урайне пăрахса нухалепе йăвалантарнине курнă. Çавăнпа та вăл старшшинан атти ђĕриклетнине илтсессĕнех те йĕрнĕ.

Ђухăн çын ађи шăнкрав сассине илтсессĕнех йĕрсе тарса кĕме вĕреннин сăлтавĕ йал историнђе пысăккăнах палăрса тăраť. Халĕ те: „Вырăс килет, асту тыттарса йарап, салтак килет—асту нухалепе ватаť"—тесе ађасене хăратакансем çук мар. Пур. Çак 14 çул кайарахри кĕсенленсе йулнă хура кунсем, йунлă сехетсем тарăхтарса аса килђĕç темшĕн хавас ађасене курсассăн. Хаљ кунти ађасем йăлтах урăхла, вĕсем вăл кунсене курман, ашшĕсем кăна лайăх астăваççĕ.

Пайан ку ађасемпе кăмăллăн калаçаççĕ. Кунта вĕсене:—Вырăс килет, асту, тыттарса йаратăп!—Салтак килет, нухалепе ăшалантараť!—текен çук, ун пек каласан та кунти ађасем ĕненес çук. Вĕсем пĕтĕмпех çĕнĕлле сывласа, çĕнĕлле ĕçсе-çисе, çĕнĕлле выљаса çитĕнеççĕ.

Кулак хăй аҫине йĕрме тапратсассăн:

— Ҫарăн! Асту колхоса кайса йаратăп, тесе хăратнă пек темҫул хăратсан та пирĕн Уйкасри пĕҫҫен хуҫалăхри аҫасем те нихҫан та шикленес ҫук. Йаҫлĕпе аҫасен сатне хăйулланса ҫитнĕ вĕсем. Пирĕн аҫасемшĕн унашкалли хăрамалла мар, кулмалла пулаť,— каласа тăраť йаҫлĕре аҫасене пăхакан комунаркка.

Кулкалаҫҫĕ, калаҫаҫҫĕ пирĕнпе аҫасем.

— Лайăх ҫитереҫҫĕ-и сире?— тесе ыйтатпăр вĕсенҫен.

— Пĕрмай сĕт, кулаҫ, ҫăмарта...

— Каккао-о-о ҫитереҫҫĕ...

— Тутли...—тесе калаҫса карĕҫ.

Кулатпăр, култараҫҫĕ те. Епĕр кулнипе вĕсем пушшĕнех хăйуллăн калаҫма пуҫăнса карĕҫ.

Аҫасем пурте таса кĕпесемпе. Вырăнĕсем те питĕ таса. Кашнин уйрăм алшăлли, уйрăм саппун. Мĕн кирли—пурте уйрăм. Пурнăҫ кăна пĕрле. Вунă ҫул кайарах, Уйкас йалĕнҫен „Ирĕклĕх" уйăрăлса лараҫҫен, кунти хĕрарăмсемех тыр вырнă вăхăтра хĕвел тухиҫҫен апатне пĕҫерсе хăрах аллипе ҫĕресне

йатса, тепӗр аллине тин ҫеҫ ыйӑхран вӑранна аҕине йатса, кушилпе кун каҫмаллӑх ҫурӑм хыҫне ҫӑкӑр ҫакса хирелле пӗҕӗк ана ҫине мекӗрленсе тухнӑ пулсассӑн, пайан кунта вӑл хуйӑх ҫук.

— Ёмӗрте асаттесем курманнине куртӑмӑр ёнтӗ.

Ёмӗртенпе аҕа ҫумӗнҕен, кӑмака умӗнҕен тухаіман пулсан, халӗ тӗлӗкре те тӗлленме пӗлменнине куртӑмӑр, тесе хӗпӗртеҫҫӗ комун хӗрарӑмӗсем йаҫлӗ пирки.

Халӗ вӗсен кашнин кашни кун, кашни ир мӗн тумалли планпа пулса пырать. Ир, свонок пулсассӑн, тӑрать те, савӑтри пек тӱрех хӑйӗн паллӑ ӗҫӗ патне кайать: хӑшӗ апат пӗҫерет, хӑшӗ йаҫлӗре аҕасене пӑхать, хӑшӗсем ҫум ҫумлаҫҫӗ, теприсен строиттӗлствӑ ӗҫӗ, хӑшӗн ака ӗҫӗ, т. ыт. те.

Калаҫса ларатпӑр Йефимӑвпа кӗнҕелер умӗнҕе.

„Талла-талла-талла ҫырлана,
Ҫум ҫумласан—кал-л-ех ҫырлана-а-а...“
тесе йурлани илтӗнсе карӗ.

Кӑнҕелер умӗнҕе ларакансен тутисем йӑлтах йӑлах уҫӑла-уҫӑла карӗҫ.

— Ăçта, ђăнах çырлана кайаççи?

— Çырлана мар, çум çумлаççĕ картар. Пайан çумласа пĕтермеллеха план тăрăх...

— План сирĕн йаланах ĕçе кĕрсе пырай?

— Нумайĕшĕ йаланах ĕçе кĕрсе пырĭ, хăш ђух пĕр куна, йе икĕ куна кайа йулни пулаĭ, а тепĕр ђух тултарса иртерсе те йаратпăр.

— А пĕр плана вăхăтра ĕçе кĕртеймесессĕн вăл тепĕр плана ђăрмантарма пултараĭ вĕт?

— Пултараĭ. Ну епĕр ăна малтантарах пĕлсе тăратпăр, вара урăх мерă тăватпăр та, сийенлех пулмасĭ,—калаçса пыратпăр çум çумланă çĕрелле.

Кулђĕ вăрттăнтарах колхоссойусран килнĕ йулташ куна илтсессĕн.

— Кашни харпăр ĕçшĕн ответ тытмасăрах иртмести сирĕн?—ыйтрĕ вăл.

— Çук, шала-пăлаллă ĕç пулсан сопрăнипе хакласа, нађар тăваканне йатлатпăр елĕр,— терĕ ăна хирĕç Йефимăвĕ...

Акă, 12 комунаркка çум çумлаççĕ çĕрулми картинђе. Çаплах йурлаççĕ хăйсем, пуççене ђикнĕ—тăпăлтараççĕ çум куракссене. Пĕр йенђи виç йăран çинђе улттăн, тепĕр йенђинђи виç йăранта каллех ултттăн.

Васкаççĕ. Епĕр çитсе калаçма пуçласан йрлама ђарăнђĕç.

— Ма ђарăнтăр тата йурлама?

— Канас терĕмĕр пулас,—хутшăнђĕç иккĕн хайăс.

— Йурласа ывăнмалла мар пуђ вăл,—хирĕçерĕ тепри.

— Маха есĕр капла икĕ пайа уйăрăлса ĕçлетĕр?

—Икĕ прикатăна уйăрăлнă. Ăмăртăва тухнă. Хăш прикатă малтан çумласа тухса çумне тирпейлесе хурать—çĕнтерет, преми илет. Хаđ ав, икĕ прикати те пĕр пекрех çумласа пыраççĕ-ха. Уçтин прикати малтан пирĕнтен иртерех панăђђĕ, халĕ хуса çитрĕмĕр-çитрĕмерех,—калаçса карĕç пирĕнпе.

Епĕр те çумлас ĕçе хутшăнтăмăр. Пирĕнпе пынă Кроссмăн, пĕђĕкренех Мускавра ўснĕскер, çума-мĕне пайанђђен çумласа курманскер пĕрремĕш хут çум тытрĕ. Кулкалаççĕ вăл çавăрăнкаланинђен хĕрсем. Хăй вăл ђăвашла „йулташ“, „сывă пултăр“, „йуратап“ теме кăна пĕлет.

— Йулташ! Йуратап, терĕ те Кроссмăн, хĕрсем лахăлтатса кулса йаđĕç.

— Каҫҫах тет пуҫ ёнтĕ хăйне хăй, ҫу-ҫумлама вĕренмен, ăҫтан йураттăр сана хĕр-упраҫ, ху йуратпатăн пуҫ те,—терĕ те пр хĕрĕ каллех лахăлтатса кулса йаҫĕҫ. Кросс ă-нĕ хăй те йурийех култарат. Анҫах вăл ы-рăсла каланине пурте ăнланаймаҫҫĕ. Хула ҫылайтарах вĕреннĕ комунарккăсем хăйсем ăнланнă пек ыттисене ҫăвашла куҫарса ăн-лантараҫҫĕ.

Сăмах хыҫҫăн сăмах тупăнат. Епĕр 'ёсен пурнăҫĕ ҫинҫен лайăхрах пĕлесшĕн.

— Мĕнле, йалта туйсем пулкалаҫҫи?

— Пулаҫҫĕ. Нумайах пулмаст пĕр туй ту-рĕҫ-ха, хамăр та турăмăр-ха ак...—терĕ те Уҫтиҫ, пĕр лайăхрах тумланнă хĕр ҫине тĕллесе пăхрĕ. Хăй кулкалат. Ыттисем те кулса йаҫĕҫ.

— Анҫах епĕр йалти пек кивĕлле мар, хĕрлĕ туй турăмăр, сăра-мĕн пулман вара. Ес тата хаҫат ҫине ан ҫыр, терĕ каллех Уҫтиҫ. Хăйсем ҫаплах кулаҫҫĕ.

— Ташласса пурте ташларăмăр, йурларă-мăр вара, пирĕн туйĕ йĕркеллĕ, кивĕлле мар. Кивĕлле ҫĕнҫынĕ хăй парне парат, епĕр ха-

мăр парнелерĕмĕр,—йĕркипе каласа параççĕ хĕрсем. Каласа та пĕтереймерĕç.

— Шан! шан! шан! шан!—тутарђĕ кил варринђи свонок.

— Апат çиме пуçтарăнмалла!—терĕ Уçтинђ.

Кашни ĕçлекенĕ хăй ĕçне пăрахса столовăйнелле утрĕç. Ађасем хăйсен пӳлĕмне, ваттисем хăйсен столовăйне кĕрсе ларђĕç. Кашнине уйрăм тарелккăпа антарса парса тăраççĕ кухђăран виçĕ хĕрарăм. 60—70 çынна 3 хĕрарăм пĕçерсе хатĕрлесе тăрантараť. Ђăн малтан какай йашки çитерђĕç, унтан пăтă, йулашкинђен пĕрер стаккан сĕт. Унтан çур сехетлĕх выртса канасси. Çамрăксем вăййа тухса карĕç. Ваттисенђен хăшĕ сулхăна кайса ларса хаçат вулама тытăнђĕç. Теприсем ђиттађнă пеккинђе шашкăлла выђама пуçларĕç, хăшĕ канма выртрĕç.

43 çул кайарах комун вырăнђе йĕри таврах хура вăрман кашласа ларнă. Ку вăрман хушшинђи кăкласа тунă акмалли çĕрсем пĕтĕм йал халăхĕн пулин те, Уйкас кулакĕсем улталаса виççĕн-тăваттăн кăна акса тăнă. Акса тăнă çех мар, хăйсем ĕçлемен вĕсем,—ђухăнсене ĕçлеттерсе, тыррисене пыçăк ам-

парсене тултара-тултара хёл каçаҫҫен Шупашкара турттарса пуйан хуçасене сутнă. Сутса та пĕтерейменни анкартисенҫи мăн ампарсенҫех çĕрсе выртнă. Пилĕкшер-ултшар лаши-ĕнисем те çисе йарайман. Çурт хыççăн çурт лартнă, тимĕр витнĕ, çĕрĕн-кунĕн ĕçкĕ ĕçнĕ.

Çав вăхăтрах Уйкас, Тептикасси, Йулаш ҫухăнĕсем выçă ларнă. Тыр пуйанĕсем, ҫухăнсен çĕрĕ çинҫе тыр туса вăл тырра пуçтарса кĕнĕ ҫух патраксемпе ҫухăнсене ĕçлеттернĕ пулин те, кивçен ыйтсан та пĕр ҫĕлĕ çăкăр паман. Уйкасри пуйан Кутамас çемйи патне тыр акнă ҫух вăрлăх çитмен пирки ҫухăн пырса ҫĕркуçланса ларса тархасласа ыйтсассăн хăш ҫух пĕрер пăт панă мĕн. Ку пĕр пăтшăн ҫухăнăн Кутамас çемйине тыр вырнă ҫух 5—6 кун вырса памалла пулнă. Ку сахал, тислĕк тăкнă ҫух тислĕк тийесе тăмалла пулнă. Çийĕнҫех пĕр пăт тыră пуçне пăт та çурă, йе ытларах памалла пулнă. Тепĕр штоф çуттине ĕçтермесен: „Каллех пырса ыйтăнха, ман пĕтекенех мар“—тесе шиклентернĕ ҫухăна. Ĕçнĕ ҫух вара: „Ес пĕр пăтран темиçе пăт туса илнĕ, ку проҫăн

çуттийĕ“ тесе кулнă. Куна Уйкассем манман. Тептикассипе Уйкас, Йулаш ҫухăнĕсемпе вăтамрах хуçалăхрисенне те кĕç-вĕç кайса ӳкес пек утса пыракан курпун лашисене сухапуç кӳлсе, тип çăкăрлă пушăт кушилĕсене çакса 12-шер, 15-шер çухрăма кайнă пĕҫĕк татăклă анисемшĕн. Тырри-пуллийĕ ку татăксенҫен çĕклемпе кăна йатса килмелле пулнă. Тислĕк мĕн кăтартма май килмен ку тăлăх татăк çĕрсене. Кăтартма май килсен те, ҫухăнăн таçтаха унăн тислĕкĕ!

— Асаттесем çаплах пурăннă. Епĕр те пурăнăпăрха вилиҫҫен, тенĕ хăшĕ. Теприсем, шутласа пăхма пĕлекеннисем,—ҫухăнсене:

— Çук, капла пурăнса кĕреке тулмасӗ. Каплах пурăнсан малашне пушшех хĕн пулаӗ, çĕрĕ татах тăвăрланаӗ, тавай Çĕпĕре вĕçтерес,—тенĕ. Нумайĕшĕ çĕтĕк-çатăк тум çурҫĕсене сутса йанă.

Анҫах 1921-мĕш çулхи выçлăх урапи халтăртаттарса килнĕ пирки, Çĕпĕртен те кайалла килмелле пулнă. Мĕн тăвас? Пӳлмесем пушă, выҫăхсем вилеççĕ, аҫасем йĕреççĕ. Пуççене усса лараççĕ каççерен урамсене пухăнса. Çак çулах пуйансем, кулаксем хĕтĕрт-

нипе Ђăваш респуплĕкĕнђи хăшпĕр районсенђе вăйлă клас кĕрешĕвĕ—„Ђаппан восстанийĕ“ пулса иртет...

Йун тăкмасăр та пулмарĕ ку кĕрешӳ.

Çураки çывхарать. Вăрлăх çук. Выçă. Çуракинђе кирлĕ таран акса хăвармасан май çук. Акмасăр хăварсан çитес çул каллех выçлăх урапи çинђен анаймăпăр. Нумай пулмасть çуралнă—çамрăк, аталанса çитеймен, Совет оркăнĕсем партти йертсе пынипе куна малтанах сисеççĕ.

— Вăрлăх хатĕрлес, ăна пĕрлештерсе хурас, теççĕ. Ку—ĕмĕртен пĕђђен хуçалăхра пурăннă, çав çулта та çавăн пекех пурăнакан хресђенсемшĕн килĕшӳллĕ мар ĕнтĕ. Пуйан кулаксем хыççăн та ђасах кайнă.

— Мĕн пур тырăсене пĕр ампара пуçтарса хураççĕ те, кайран илсе кайаççĕ, татах выçмалла пулать, Совет пулăшма мар—выçтарса вĕлерет, тесе сăмах сарма пуçарса йараççĕ йал „пуçлăхĕсем“, кулаксем. Халăх пăтранса кайать.

Халĕ акасене катаранах хатĕрленсе пыратпăр. Вăл вăхăтра мĕн кирли—хатĕр пултăр тетпĕр. Куна тумашкăн кашни йалтах,

кашни колхосрах, кашни пĕҫҫен хуçалăхри ҫухăн, кĕтӳç, вăтам малтанах хатĕрленеççĕ. Ун пек тума кирлине I-мĕш поҫшевикла çуракийех пĕтĕм йенĕпех палăртаť. Халĕ малтанах хатĕрленетпĕр. А, унҫух! 1921-мĕш çул, хресҫенсем малтанах ăна-куна ним те пĕлмен. Çавăнпа ăна хатĕрленме хĕн те пулнă.

— Хресҫен вăл хăйĕн ака-сухапа пурăнмаллине лайăх пĕлсе тăраť, хатĕрленмеллине те хăйех туйаť, авалтан çын хушнипе туса пурăнман, пире ун çинҫен каламалли те çук,—тенĕ Уйкас çыннисем. Каласа ăнлантарма та хĕн, çĕнĕлле ĕçленин оппăҫĕ çук, акрономĕ те çук, пулсан та йалах пыман, пайанхи пек йалхуçалăхне вĕренекен крушоксем, тĕрлĕрен курссем, технĕккăмсем пулман (йалхуçалăх технĕккăмĕсем). Сорттировккă та Уйкасра пулман, вейăлккă та çук, суртлă сĕлĕ те пулман, тымар-çимĕçсем тăвассин оппăҫĕ те йалта çук, ун çинҫен тĕплĕн пĕлекенсем те сайра. Пĕр йенҫен те пайан кунхи пек пулман. Пурнăç, йалти ҫухăнсем мĕнле наҫар пулнă, çавăнтан уйрăмах та мар пек пыраť. Совет оркăнĕсĕм виçĕ çул кăна ата-

ланса пынӑ пирки пурне те хӑвӑртрах йусаса ҫитермелле мар. Пуйансем ҫаплах та тарҫӑсем усраҫҫӗ, пусмӑрлама пӑрахмаҫҫӗ Уйкасри ђухӑнсене. Пытанса та пулин хӗсӗрлеҫҫӗ, ҫаплах улталаса пурнасшӑн.

Комуниссен партти ӗретне Уйкаспа Тептикасси йалӗсем таврари ђухӑн хресђенсенђен—патраксенђен кӗрекенсем ђылай пулнӑ. Патраксемпе ђухӑнсем пӗр ҫӗре пӗтӗҫме пуҫлаҫҫӗ. Ҫӗрпӳри партти органисатси ђухӑнсене пӗтӗҫтерессине асрах тытса тӑрать. Ђухӑнсем тӑтӑшах пухусене ҫӳреме пуҫлаҫҫӗ. Ҫӗрпӳри партти орканисатси вӑйлансах пырать. Ун ӗретӗнђе нумайӗшӗ краштӑн вӑрҫинђе пиҫнисем, пролеттари револђутсине хирӗҫ тӑракансемпе кӗрешнӗскерсем тӑраҫҫӗ.

Ҫирӗп орканисаттӑрсем, кӗрешӳре пиҫнӗ комуниссем хӑйсем умне комунсем орканисатсилес сатађа та лартаҫҫӗ. Вӑл вӑхӑтра питех те хӗн пулин те ҫак ӗҫе туса пырасшӑнах. Вӗсем, ҫак пуйан-кулаксен пусмӑрӗ айӗнђе пурнакан ђухӑн хуҫалӑхсене пусмӑртан пӗтӗмпе кӑлармашкӑн, ҫӗре—ҫӗнӗлле ӗҫлесе тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартас пулсассӑн—пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсем урлӑ, патраксемпе

ђухăн, вăтам хуçалăхсене пĕрлештерни урлă кăна тума пулнине лайăх пĕлсе тăнă. Хăйсем тавра пуйансем патĕнђе тарçăра пурнакансене, ђухăн хуçалăхрисене тађă çыхăнтарса çитереççĕ. Йалти ђухăнсен, вăтамсен пĕрлешсе çĕре пĕрле, çĕнĕлле ĕçлесе çеç тырпул тухăçлăхне хăпартма пулассине, пуйансен пусмăрлăхĕнђен хăтăлассине тĕплĕн каласа ăнлантараççĕ. Вĕсенђен пĕри—Йефимăв й-ш. Пуху хыççăн пуху пулаť ђухăнсен. Сахалтараххăн пулин те хĕрарăмсем те пухăнаççĕ, авалтанпа пуйансем пусмăрлани çинђен каласаççĕ орканисаттăрсемпе. Çав вăхăтрах: «Крестьянин, держись за коммуну» йатлă кĕнеке те ђухăнсен хушшине пынă. Калаçаť кĕнеке те вĕсемпе. Çăмăл ђĕлхепе калаçаť вăл ĕçхресђенĕсемпе: комунăна йепле тăвасси çинђен, унта йепле ĕçлессипе çĕре мĕнле çĕнĕлле ĕçлесе çемçетесси çинђен, пуйансен пусмăрĕнђен тухасси çинђен каласа параť кĕнеке те орканисаттăрсем пекех. Паллаштараť вĕсене комун пурнăçĕпе. Ђухăнсем ăна йуратсах кайаççĕ. Унтан уйăрăлаймаççĕ те нушара, пуйансен пусмăрĕнђе пурăннă çынсем.

Çакăнтан вара, выçăпа аптраса çитнĕ çулах „Ирĕклĕх“ комунă пулса тăрат. Ку мартăн 18-мĕшĕнҫе пулат. Лутра шĕшкĕллĕх вăрман хушшине куçаççĕ. Унҫух комунра 48 йатак шутланнă.

Комунă пулни йалти пуйансене калама çук вĕҫĕхтерет, вĕсем тĕрлĕрен май тупса комуна пĕтерсе лартасшăн та тăрăшаççĕ. „Ирĕклĕхĕн“ пĕр пĕҫĕк çитменлĕх пулсан, йĕпрен пĕрене тунă пек, ун çинҫен темле шухăш та, темле сăмах та сарнă.

Çĕр виçи. Çĕр касса илнĕ вăхăтра пăлханусăрах пулман. Йалти пуйансен нимпе те комуна çĕр касса парас килмест. Тапаçланаççĕ вĕсем. Хăшĕ-пĕри комунарсенҫенех вĕсен суйа сăмахĕсене итлеççĕ, иккеленеççĕ.

— Тавай, тухас, кун пек май килмĕ.

Тухаççĕ. Çĕр виçи пынă вăхăтра комунра 32 йатак кăна йулат.

Ыраш акас вăхăт та çитет. Каллех вăрлăх çук. Ăна хатĕрлесси те питĕ йăвăр ĕç. Комун орканисаттăрĕсем Йефимăвсем çимесĕр, çывăрмасăр тенĕ пек, ĕçлеççĕ. Çав тери тăрăшса ыраш вăрлăхне те тупса шуратса хăвараççĕ. Нумай пусу та тăваççĕ. Нихçан

çемçетмен çĕр çинҫе малтанхи çулах тырă аван пулмасси паллах. Ыраш йапăхрах пулнă. Кун хыççăн йалти кулаксене „Ирĕклĕх“ çинҫен сăмах сарма татах çăмăлтарах. Клас тăшманĕ кĕвĕçет. Хирĕçет тăшман. Йалсенҫе килĕрен çӳресех вăл суйа елек сарать „Ирĕклĕх“ çинҫен.

— Ой! Комунă кивçен укçа илсе тултарнă тет те, аҫи-пăҫипех таçта ĕçлеме хăваласа каймалла тет.

— Йефимăв—комунă пуçлăхĕ комунарсене хĕнет, тет.

— Йефимăв комун укçине пуçтарса ҫикнĕ, тет те, халĕ таçта тарнă тет, теççĕ Йефимăв Шупашкара конферентсине кайсассăн.

— Комунă... „Комунă пĕтсе ларать, комунарсем выçă лараççĕ тет“ текен халапсем вĕçеççĕ комун тавра.

Йефимăв Шупашкартан ҫасах тавăрăнайман. Комунăн Шупашкарта тумалли ĕçĕсем ҫылай пулнă пирки конферентси пĕтсен те пĕр виç-тăват кунлăха йулмалла пулнă. Çак 10—12 кун хушшинҫе Уйкасра клас тăшманĕсем тĕпсĕр-тĕменсĕр шыв пăтраннă пек пăтратса йараççĕ. Кулаксем йури сăмах сар-

чине тёплёнех сисеймен пирки комунарсенђен те хăшĕ: «Йефимăв ђăнах тарђĕши?» тесе иккĕленсе тăнисем те пулнă. Комунарккăсенђен хăшĕ йĕме те тапратнă.

— Есĕ комуна кĕресшĕн пултăн! — тесе упăшкисене пĕсĕртме тапратнă. Хăшĕсем: „Уйăрăлса кайатăп, ађасене хуť мĕнле пăх“— тесе те каланă. Комунăран пĕђĕк йапаласене йалалла куçарма та пуçланă. Пĕр-пĕринпе те йатлаçса пĕтнĕ. Никамах та тивĕçлĕн ăнлантаракан пулман 10—12 кун хушшинђе. Аптранипе вара: „Ђăн та тарђĕши ку Йефимăв“—тесе пĕрне Шупашкара пĕлме йараççĕ. Çав вăхăтрах Йефимăв çитсе те тăраť. Тĕлĕнсех кайаççĕ комунарсем. Ађасен ашшĕ таçтан, нумай пурăнса таварăннă ђухнехи пек, хĕпĕртесе кайнипе малтанлăха нимех те калаçаймаççĕ. Кулкала тăраççĕ. Йефимăв та тĕлĕнсе тăраť. Ăнланаймасť малтанлăха.

Мĕнле пулнине каласа параççĕ комунарсем.

Йефимăв Шупашкартан комунă вађђи пулăшу илсе килни комунарсене татах хаваслантарса йараť.

Çавăн пек те пăснă пĕр çемйерен те лайăх пурнакан комунарсен хушшине клас тăшма-

нён елек-сămахĕ. Комунăна пĕтерсе лартасшăнах вĕҫĕлтетнĕ пуйан-кулаксем виле ҫинҫи хуртсем пек.

Ҫук, комунă пĕтмест!

Анҫах, йал сынниенҫен нумайĕшĕ ҫакăн хыҫҫăн комун ҫине тӳртĕнле пăхма пуҫлани налăрнă.

— И-и-и, комун ҫӳри!

— И-и-и... тур тăшманĕсем!—тесе витлеме тапратаҫҫĕ комунарсен аҫисене. Комун тыррисем ҫине йури выҫăх йарса ҫĕмĕрттереҫҫĕ.

Пĕр каҫ кунашкалли ытлах та хурланмалла пулнă. Кашласа ларакан тырра екскурҫҫине пынă сынсене кăтартса ҫӳреҫҫĕ комунарсем. Савăнаҫҫĕ аван ӳсекен комунă тыррине пăхса. Тырă хушшинҫе ларакан улмуҫҫи патĕнҫе нумайҫҫен каласса лараҫҫĕ комунарсемпе екскурсантсем.

— Пĕлтĕрхинҫен нумай ытларах тăвасса шанатпăр ĕнтĕ кăҫал, тесе таврăнаҫҫĕ килкартинелле утса пынă ҫух комунарсем.

Хĕвел анаť. Уйкасра выҫăхсене пуҫтарса хупаҫҫĕ. Каҫ пулнă ĕнтĕ. Пурте тĕплĕ комунăн. Уйри тырпул кăна хире сын куҫне йул-

нă пек йулаŤ. Ăна çын сийенлĕ тесе шутлама та пултарайман, анђах...

Тĕлĕнмелле пулса тăнă ирђђен.

— Тырра йăлтах таптаттарса çитерсе пĕтернĕ, тесе ђупса килет выртмаран тавăрнакан комунар ађи.

Комунарсем ђупса тухаççĕ. Тырра йăлтах çавăрттарса выљăха çитерсе пĕтернĕ.

Ним калама та пĕлмелле мар. Йĕрсех йамалла йăваланса луђăрканса пĕтнĕ тыр çине пăхсассăн. Нумай мар тырра çĕмĕрсе тăкни йĕрмелле те пулнă çав.

Йефимăв пуçне тытса нумайђђен ђĕнмесĕр пĕрре кăвакарса, тепре шуралса кайса тăнă.

Никам çĕмĕрттерни те паллă мар, ури-аллине хурса хăварман клас тăшманĕн выљăхĕ.

Çакна та курнă „Ирĕклĕх".

Ку кăна мар!

— Вĕлеретпĕр сире!—тесе куçăнах кăшкăрса çӳреççĕ кулаксем. Комун выљăхĕсене çĕрле вĕлерсе кайнисем те пулнă.

„Ирĕклĕх" тапаçланаŤ. ТăрăшаŤ вăл çапах. Комун орканисаттăрĕсем нимле елеке те парăнмаççĕ. Тытăннă ĕçе туса çитересех, комунарсĕн йатне çĕртес мар, йăвăрлăхсăр

пысăк ĕç пулмасť, тенĕ. Комунă тапăçланатех. 1922-мĕш çулта пуш комунă килкартне пĕр пĕђĕк мунђа пекскер куçарса лартаççĕ. Тин çеç йусаса лартнăђђĕ ку çурта хурал тăркаламашкăн.

Пĕр лăпкă каç, пур халăх çывăрса пĕтсен, „Ирĕклĕхре“ вут тухаť, пĕђĕк пўрте çунтарса йађĕç клас тăшманĕсем. Комунарсем çапах та хал йамаççĕ.

1923-мĕш çулта çийĕсене витсе пĕтерсе кĕмелле выђăх картисем туса лартаççĕ. Хăшхăш çемйесем пурăнма кунта куçаççĕ. Пĕрлештермелли пурлăхĕсене пĕрлештеркелеççĕ. Хăшĕсем çав вăхăтрах „Ирĕклĕх“-рен тараççĕ. Хăшĕ-пĕри, комунăна пуçаракансем, ђаххуткăпа вилсе те кайаççĕ. Хăшĕ тухаççĕ, хăшĕ кĕреççĕ. Йăвăрлăх пĕтмест-ха. Харпăрлăхран уйăрăлма питех те хĕн мĕн. Ку манăн, вăл санăн, ман лайăх, сан нађар, еп апла килĕшме пултараймастăп, текенсем ђасах пĕтмеççĕ; комунăра кивĕ пурнăç кайашĕ самайах палăраť. Унашкал пулни паллах, мĕншĕн тесен ку, харпăрлăх, тахçантан, авалтан çирĕпленсе пынă йапала. Хавшакрах парттийтсăсем те ку шухăша парăннă; ку тĕлĕшпе Иванов мал-

а пынӑ. Унӑн: ку ман, вӑл сан, тесси комунӑ ӗҫӗнҫе питӗ ҫӑрмантарса пынӑ. Вӑл пӗҫӗккӗнех харпӑрлӑхшӑн тапӑҫнӑ, пӗтӗм йышшӑн вӑйхалне хурса ӗҫлес вырӑнне, уйрӑмлӑхшӑн тӑрӑшнӑ. Куна вӑл кӗретӗн мар, вӑрттӑнтарах майлаштарса пырат̆.

— Хам мар еп, анне памасӑ, арӑм вӑрҫат̆, тет ҫуртйӗрсене пӗҫӗккӗн пӗрлештерме тытӑнсассӑн. Ку ӗнтӗ пыл хурҫӗсем пурӗ пӗрле тӑрӑшса ӗҫленӗ ҫух сӑпса пырса кӗрсе пурне те пӑтратса йанӑ пекех пулнӑ.

— Епӗр пӗрлештеретпӗр, Иванов хӑй ма пӗрлештермест? Комунис та апла хӑтланат̆!

— Есӗр хусамӑр апла калаттӑр, ӗҫре урӑхла...

— Капла пире улталасшӑн пулмалла, теме пуҫланӑ комунарккӑсем. Пухусенҫен киле пырат̆ те Иванов пӗтӗмпех урӑхла:

— Мана хама калама питех мар, есӗр ҫын сем умӗнҫе те калӑр, епӗ сирӗн ҫине йарӑп, тет. Комуна пырат̆ те:

— Пайан каллех арӑмпа вӑрҫрӑм-ха, тарӑхса ҫитрӗм ӗнтӗ, тет.

Ӑна «аҫашлакансем» те пур.

— Рас килтисем килӗшмеҫҫӗ те, ӑҫтан

пĕрлештертĕр, арăмĕпе ун пирки вăрçнине хам та курнă...

— Амăшĕ те шыв патне кашни анмассеренех йатлаçать, «Ирĕклĕхе" ылханать, теççĕ хăшĕ—комунарсенҫенех. Пуху ним тума та аптăрать.

Паллах, малтанлăха, тин çеç уйăрăлсаларнă комунăн, ĕçхатĕрĕсем те çителĕклĕ мар, пурте çителĕксĕр. Ĕçлеме те нумайрах тивет. Кам килсе ĕçлесе патăр?! Комунарсен хăйсенех тумалла. Иванов парттийтсă ку ĕçпе те килĕшеймен.

— Урапа хатĕрĕсене те хатĕрлемелле, ăна та тумалла, пурне те хамăрăнах тумалла, ăçтан туса çитермелле-ха, теме пуçланă Иванов. Вăл комуна малалла йарасшăн мар, аркатса йарасшăн пулнă иккен. Темле майпа хăтлансан та салатса йама май килмен комуна. Вара Иванов хăй те комунран тухать.

Вăл вăхăтра комунисах комунран тухни „Ирĕклĕхшĕн" сийенлĕ пулнă пулин те, çавнашкал „парттийтсăна" тархасласах комуна хăварас çук ĕнтĕ:

— Тухать тĕк тухтăр терĕмĕр, теççĕ комунарсем.

— Тухаҭ тĕк тухтăр тесе мар, тытса кăларса йамалла пулнă вăл „парттийтсăна“ пирĕн,—çирĕплетеççĕ комунарсемех. Ун вырăнне çирĕп парттийтсăсем пур комунра. Парттире тăман комунарсен те—ĕлĕк тахçанта нпа кĕтӳ пăхса, тарçăра пурăннăскерсем ку Ивановран темиçе хут çирĕп шухăшлă, хастарлă ĕçлеççĕ. Иванов тухса кайсан пушшĕнех хастарлă ĕçлеме тытăнаççĕ. Вĕсем комуна йĕп вĕçне çитерессинҫен шикленеççĕ, комунăна вăйлатасшăн.

Вĕллере пĕрле ĕçлесе пурнакан хуртсене пăтратса тăракан Иванов сăпса уйăрлни—тепĕр йенҫен усăллă та пулнă.

— Вот, вăл вăхăтра пирĕн ĕретре практĕккăри сылтăм сулăнăçри оппортунис кам пулнă, акă кама пĕçертмелле пулнă пирĕн „Ирĕклĕхре“ унҫух, вăл тухнăшăн хăшĕ пăшăрханнă пулнă!—тет пĕр çамрăкĕ.

— Унҫух та... Парттирен сирпĕтрĕç Иванова, ăçтан тытса тăран ăна парттире,—ответ паҫĕ çамрăка Йефимăв пирĕн йенелле пăхса.

Комунă пурнăçĕ кăштах улшăнаҭ. Комунарсен ĕçĕ татах та пĕтĕçсе пыма пуçлаҭ, хастарланаҭ, паттăрланаҭ, çĕнтерӳ вăйланаҭ.

Комунă пуринҫен ытла тырпул тухăҫлăхне хăпартассишĕн, выҫăхсене ытларах ĕрҫетессишĕн тăрăшаť. Выҫăхсем нумай хутшăнаҫҫĕ. Ăратлă пăрусем, ăратлă сыснасем, ăратлă ҫăхсем илеҫҫĕ.

Ăратлă выҫăхсене ĕрҫетес пулсассăн—витесем, картасем, вĕсене усрамаллисем ҫĕнĕлле кирлĕ. Вĕсене тăвас пулсан йăвăҫсем нумай кирлĕ. Йăвăҫсене илсе килес пулсан питĕ инҫете каймалла. Укҫа-тенкĕ те нумай кирлĕ. Лашасем пĕр иккĕ кăна. Вĕсем те наҫар. (Пур лашасăр, ĕнесĕр ҫухăнсем пĕрлешнĕскерсен, паллах, хăвăртах лашасемлĕ, нумай ĕнесемлĕ пулайман комунă).

Ҫавăнпа та ҫуртсем тума ҫывăхрах майсем тупмалла пулнă. Вăл майсем пирĕн пур: хăйăр пур, тăм пур, улăм нумай, ĕҫлеме вăй пур, пурнăҫ малаллах пынă май хастарлăх хăпарсах пыраť. Анҫах ăслай ҫук. Кунсăр нимех те тума ҫук ĕнтĕ. Пĕлни йаланах кирлĕ.

Шупашкара ăс кайса ыйтаҫҫĕ. Тен, технĕк те парса йарĕҫ, теҫҫĕ. Анҫах ку ĕҫ технĕкĕсем пулман Шупашкарта. Технĕк илсе килеймеҫҫĕ. Ун вырăнне тăмран ҫурт тăвасси ҫинҫен

вĕрентекен кĕнеке илсе килеççĕ. Унпа паллашсанах ĕçлеме пултаракансем пурĕ пĕрле пухăнса çырмана кĕреçесемпе анаççĕ те, çуртсем тума йурăхлă тăма суйласа илеççĕ, хăшĕ ђĕреспе, хăшĕ лашапа тăма „Ирĕклĕхе" куçараççĕ. Хăшĕ хăйăрпа хутăштарса тăраççĕ, хăшĕ кирпĕђ пеккине тăваççĕ, хăшĕ çăраççĕ кервен урисемпе.

— А, ку усăллă йапалаçке, тавай кирпĕђ тума тапратас! Тавай тытăнас, тытăнсан пулатех, теççĕ.

Çав вăхăталла хайхи технĕк те çитет. Кĕске вăхăтрах пĕрле тытăнса кирпĕђ савăђĕ туса лартаççĕ. Пĕрле çав, пĕрле. Çак „пĕрле" сăмах кунта пысăк вырăн, историре пулман вырăн йышăнать. „Пĕрле сурсан кӳл пулать!" Çапла вара тимлесе пĕтĕçсе тăмпа хăйăртан çунми, тăшман хайарлăхне те парăнми „Ирĕклĕх" çурђĕсем тăва-тăва лартаççĕ.

Хăйсем ирĕккĕн, хăнăхусăр никам пулăшнисĕр, технĕксĕр-мĕнсĕр тунă—пирвайхи вити питех мухтанмалла пулман. Çапах та выљăхсене усрами мар. Хаљ унта пĕр пӳлĕмĕнђе лашасем, тепринђе—пăрусем пурăнаççĕ.

Тăм укçаллă йапала мар. Кайран татах 20

ĕне вырнаçмаллăх вите туса лартаççĕ. Тăрăшсан пулатех. Ку витере кашни ĕнене пурăнмалли уйрăм пÿлĕм, уйрăм апат хурса памалли, уйрăм йĕвен, кашни ĕнин уйрăм йат. Вулаканшăн сăмахпа çырса кăтартни питех те мар пулĕ, кураканшăн ун пек мар. Куракан ђĕрине калама çук хаваслантараççĕ çак ĕçсем. Пур ĕнине пĕрле шăварма кăларса йарсассăн,—йĕркеллĕн утса кайса шыв ĕçсе килеççĕ те, каллех харпăр хăй вырăнне хăйсемех шыраса тупаççĕ, йе хăш ĕни теприн пÿлĕмне кĕрсе тăрсан, вăл пÿлĕм „хуçи“ пырсан—вăйпах кăларса йарат унтан. Сыснасем те нумай. Вĕсен те тăмран тунă уйрăм çурт. Каçăр сăмсаллă, шапшур ÿт-тирлĕ сысна çÿрисем хăйсен çурђĕ умĕнђе хĕвел çине тухса выртнă та, ађашланса ăхлатса выртаççĕ. Унтан иртнĕ ђух хăвăн та вĕсене тытса ађашлассу килет, ађана ађашланă пек.

Кролĕксем те нумай. Вĕсен те уйрăм çурт. Сурăхсене вĕрлĕксенђен йаçлĕ туса панă. Пурин те йĕркеллĕ, çĕнĕлле пурнăç. 1926-мĕш çулта шкул уçăлат, ку çулах столовăйпа кăнђелер те тăваççĕ. Пĕтĕм 100 прођђăнĕпех пурлăха пĕрлештереççĕ. Пĕрлех пурăнма пуçлаççĕ.

Партти орканисатси ҫирĕппĕн йертсе пынипех, пурнăҫ йусанса-йусансах пырат̆. 1926—27-мĕш ҫулсенђе оппăт та ытларах пухăнат̆. 1923—24-мĕш ҫулсенђе малтанлăха, вĕсен ĕҫ укҫисем памаллисем пулнах. Унђух ĕҫ укҫисене кун шуђĕпе шутласа тӳленĕ пулсассăн, 1926—27-мĕш ҫулсенђе ĕҫе кура (ĕҫрен) тӳлеме пуҫлаҫҫĕ. Паллах, ĕҫре пурте пĕрпекех пулман, малтанлăхра вăл ђылайах палăрнă.

Кахалтараххисем, ĕҫе ҫийелтереххĕн тăвакансем вĕсен те пулнах. Ҫавăнпа та ĕҫ укҫине ĕҫе пахаласа тӳлесси, лайăх ĕҫлекенсене лайăхрах тумлантарасси—питĕ кирлĕ йапала пулнă. Малта, хавасланса ĕҫлекенсем, паллах, „Ирĕклĕхре“ ытларах пулнă. Ҫавăнпа та комунă малалла кайма пултарнă. Ĕҫрен пăрăнарах ҫӳреме туртăнакансене те воҫпиттани парасси комунăн кулленхи ĕҫех пулнă. Партти ђленĕсем кун ҫине те ытти ĕҫсем ҫине пăхнă пекех ҫителĕклĕ пăхнă, йертсе, ĕҫлесе пынă. Воҫпиттани ĕҫĕ комунăра нађарах пулман. Вăл ĕҫ те кунран кунах вăйланса пынă. Комунă хăйĕн ĕҫĕпе Уйкаспа Тептикассишĕн кăна мар, таврари йалсемшĕн пĕрлешӳллĕ хуҫалăх примерĕ пулса тăрат̆.

Комунă çĕнĕлле ĕçленине таврари йалсем те йышăнма пуçлаççĕ—плукăсем туйанма тапратаççĕ. Вăтам хуçалăхрипе ђухăн хуçалăхри ĕçхресђенĕсем те, клас тăшманĕ темђул сăмах сарсан та, комунă пекех йалта та минерал çăнăхĕпе усă курма пуçлаççĕ. Вăл ђăн та çĕре çемçетсе тырпул тухăçлăхне хăпартнине пĕлсе çитеççĕ. Кулаксем минерал çăнăхĕ çинђен сăмах сарнине ĕненми пулаççĕ. Комунă минерал çăнăхĕсемпе кашни çулах усă курса пынă. Тырпул тухăçлăхне хăпартас пулсан—унсăр май килменнине комунарсем татах та лайăх пĕлсе çитнĕ. Тислĕкпе те çемçетнĕ. Çавăнпа та вĕсен тырпул тухăçлăхĕ пĕр вырăнти çĕртех çултан çул ӳссе пынă. Пăтпа шутласа кектарган:

| | 1924ç. | 1925ç. | 1926 ç. |
|---|---|---|---|
| ыраш | 54 | 53,6 | 78 |
| сĕлĕ | 52 | 60 | 60 |
| çĕрулми | 150 | 300 | 840 п. тухнă. |

1930-мĕш çулта шаттилăвски сĕлĕ кектартан 145 пăт, вырăнти сĕлĕ 110 пăт тухнă.

Пурнăç кунран кун малалла шăваť. Кивĕ, хĕн, çителĕксĕр пурнăç кунран кун асăнмалăха çеç йулаť.

„Ирĕклĕх“ пулса çитессе шанман Уйкас çыннисем, таврари йалсем те комунă малалла кайасса ĕненес килмен çĕртенех ĕненме пуçлаççĕ. Ӳсĕм, хĕрӳллĕх, çĕнтерӳ ĕнентеретех вăл. Куçа çисех тăраççĕ вĕсем, ӳсĕмсем. Комунарсен çирĕп йаҫĕ хăпарсах пыраҫ. Пайан мĕн ĕç туни, ыранхине кăтартса пыраҫ, оппăт хутшăнаҫ.

Комунă 10 çул тултарнă çĕре комунăра пурĕ 130 йатак, 49 çемйе шутланаҫ. Комунăра ĕçлесех тăрайманнисем те пур. Анҫах вĕсем пурте комунăрах пурăнмаççĕ. Хăшĕ вĕренеççĕ, хăшĕ вытвишентсă шуҫĕпе те малалла ĕçлеме кайнă. Тĕрлĕрен ответлă ĕçсенҫе те ĕçлекенсем нумай.

Строиттĕлствă халĕ те баскатаҫ, васкамалла та. Комунă 10 çул тултарнă çĕре ҫăх-ҫĕп усрамалли çурт туса пĕтернĕ. Пурăнмалли çуртсене йусанă. Тимĕрç лаççи ĕçлет, кирпĕҫ саваҫĕ... Кирпĕҫ савăтне туса лартнăранпа темиçе пин кирпĕҫ тунă. Хăйсене ваљљи те çитнĕ, сутнă та. Нумай тупăш панă вăл.

Пысăк çитменлĕхсенҫен пĕри—пурăнмалли çурт пурне те çителĕклĕ марри пулса тăраҫ. Ку пысăк ҫăрмав.

— Пурӑнмалли çурт пурин ваҗҗи те пулсан, пирĕн комуна нумай йыш хутшӑнмалла, пурӑнмалли çителĕклĕ маррийех касӑт, пĕтĕм тухакан пĕҗĕк тавлашу та çакӑнтан тухат̆, вӑл халĕ те пĕтĕмпех пĕтменха, теççĕ хаҗ комунарсем.

Кунсӑр пуçне, харпӑрхӑйĕн пулнӑ пӳртĕнҗе харпӑрхӑй кӑна пурӑнма тӑрӑшни çинҗен каласа параççĕ.

— Авалтан пĕҗҗен, пĕр çемйепе кӑна пурӑннӑскерсем, хӑвӑртрах çĕнĕлле пурӑнма вĕренсе çитеймеççĕ çав,—теççĕ хӑйсемех. Кирек мĕн ĕçе кайас пулсан, пухусем пуçтарас пулсан—3 йала кайса çĕнĕрен кĕнĕ комунарсене кашнине каласа çӳремелле. Опшешитти пурин ваҗҗи те çук пирки çĕнĕрен кĕнĕ җленсем комуна куçайман. Пĕрле ĕçлени кӑна.

Тепĕр пысӑк çитменлĕх—акрономпа тухтӑр çукки. Вĕсемшĕн тӑтӑш Çĕрпӳве җупма лекет.

Кусем вӑхӑтлӑх çитменлĕхсем кӑна. Вĕсене çĕнтерессе хĕнех мар, ун пек мар йавӑрлӑхсене çĕнтернĕ, хаҗ вĕсен хӑйсен те тĕрлĕрен хуласенҗе вĕренекенсем пур. Тепĕр сахал

çулсенђенех хăйсен ђленĕсенђен акрономсем, уђитлĕсем, тухтăрсем, тĕрлĕрен ăтстаçсем пулса килĕç, килĕç кăна темелле мар—килмелле те.

Уђитлĕ хăйсенех вĕсен, комун ђленех. Куђтур ĕçне вăл аван туса тăрать. Политтĕк вĕренмелли крушоксем туса, хĕл каçиђђен нумай ĕçлет. Ђленсем хушшинђе хĕрарăмсенђен те, арçынсенђен хутла пĕлменни 1930-мĕш çултанпах çук. Кунти хĕрарăмсен халь: ађа пăхас пулать, апат пĕçерес пулать, каккуй вĕренме кайма та, тесе тăмалли çук. Вĕсене уйрăм çын тăвать. Хăйĕн ĕçне тусан—комун ђленĕ вăхăтра канать, вăхăтра çийет, вăхăтра хаçат-шурнал вулать, политтĕк крушокне çӳрет, вăхăтра тырсем хушшинелле кайса уçăлса килет. Вăхăтра кино килет. Хĕвел ансан каçхи апат çисен пĕђĕк вăрман хушшинђе комун хĕр-йашшисен вăййи-кулли пуçланать. Йе купăс сасси шăранать. Илемлĕ шур кĕпесем тăхăннă, хĕрлĕ тутăрлă хĕрсен, йункштурмлă йашсен вăййă картинђе хĕрсем икшерĕн йăпăрлатса ташлани ваттисене те савăнтарать. Комунарсем кăна мар, Уйкасран ытти çамрăксем те килеççĕ унта каçсерен. Епĕр те

икĕ каç вĕсен вăйййинђе пулса савăнтăмăр. Çапла та иртет вĕсен канмалли вăхăт. Ир каллех вĕлле хурђĕсем пек ĕçлеме саланаççĕ.

Çĕнтерӳллĕ пурнăç мĕн ђул малалла кайнăçемĕн клас тăшманĕ хирĕçсе, кĕвĕçсе пырассине пăрахмасть. Анђах унăн вăйĕ хавшалсах пырать. Урăхла пулма та пултараймасть. Мĕншĕн тесен, ĕçхалăх ӳсĕмĕ мĕн ђул малалла кайнăçемĕн унăн кистенĕ пуранса пырать, ку клас тăшманĕн ђи хăрушли. Ăна кулак катаранах курать. Кĕрешет комунпа.

Кутамас текен çемйе хаљхи вăхăтра та „Ирĕклĕхĕн“ тăшманĕ пулса тăрать. Ку çемйе комунă аталанађђен те тахçантанпа комунра тăракан тăлăх çемйе ађисене комунă çинђен темте пĕр сăмах сартарма хĕтĕртсе пăсса тăнă, халĕ тем тĕрлĕ тискер вăрттăн ĕçсене туса тăраççĕ. Пĕр ывăлĕ темле майпа Сĕнтĕрвăрринђи технĕккăма вĕренме кĕнĕ-кĕнех. Вĕреннĕ çĕрте те, ĕнтĕ, килти çемйе комунра тăни—„аслă“ йат. Ку вĕренекене технĕккăмра çтиппенти памаççĕ. „Вĕсен килте пуйан пурăнаççĕ“ тесе. Мĕн тăвас? Ку нимех те мар таха, малашне кăларса та йарĕç технĕккăмран. Ăшђик вăркать стутентăн, каç та

çывăрмасŤ, уроксене те вĕренмест. Йулашкинҫен киле метр тăршшĕ çыру çырса йараŤ, йепле те пулин май тупса комуна кĕме тăрăштармашкăн. Килтисем ку „сатанине“ ĕçе кĕртеççĕ-кĕртеççех. Комунăра тĕплĕнех сŷтсе йавайман пирки пули—ку çемйе вăхăтлăха комунă ҫленĕ йатне илтет. Комуна кĕнĕ пекки тусанах васкаса „савнă стутент“ патне комунă ҫленĕ тесе майлаштарса ĕнентерŷ илсе йараççĕ. Шутланă—пулнă.

Стутент ҫĕри лăпланҫĕ, хавасланса хĕрсемпе çŷреме пуçларĕ. „Епĕ „Ирĕклĕх“ комунă ҫленĕ. „Пирĕн комунă 1921-мĕш çултанпа ĕçлет!“ тесе çŷрет стутент. Анҫах, тепĕр самантрах:

*Хаклă тăван çемйе!*

Халĕ комунăра тăмасан та пултараттăр. Хама мĕн кирлине туса çитертĕм, нимĕн те шикленмелли çук. „Пире комуна вăйпа кĕртрĕç, çавăнпа та епĕр унтан тухатпăр, Сталĕн колхоса та, комуна та вăйпа кĕртме хушмасŤ, пире комунран кăларăр“ тесе сайавлени парăр.

*Сирĕн савнă ывăлăр*

тесе çыру вĕçтерет Уйкасалла. (Унăн „потлĕннĕк“ çыруне епĕр тупса вулаймарăмăр, комунарсем ăна лайăх пĕлеççĕ). Кун хыççăн Кутамас çемйи каллех елеклĕ сӳпĕлтĕве пуçарса йарат йал хушшинҙе.

— Пирĕн ывăл çыру йаҙĕ. Комуна вăйпа та, астарса та кĕртме йурамаст, пире вăйпа кĕртрĕç вĕсем, сире те вăйпа пекех кĕртнĕ вĕт, тухăр унтан! Ирĕклĕ пурнăçран, татăк вĕççĕн çимелли пурнăçра пурăнмалла-ха, хăйсемех аппаланҙҙĕр пур кахал, тесе сăмахсем вĕçтерме тапратаççĕ килĕрен. Пĕҙĕк аҙи те пулин ытти вĕтшакăрсем хушшинҙе комунах çийет. Мĕн тăвасси пур. Вĕсене итлекенсем те çук мар. Кăçал çеç кĕнĕ тăлăх хĕрарăм çемйи ку сăмаха парăнат. Пайанхи пухура та „тухас пуљ тетĕп комунран, çитсă памаççĕ, сахăр памаççĕ“ тесе тухса каларĕ. Анҙах „Ирĕклĕхе“ ку та хăрушă мар. Вĕсем, клас тăшманĕсем, екскурççине пынă çынсене те:— комунă пĕтет тесе тăма, тем-те пĕр каласа пăсма тăрăшаççĕ. Çук, ку сăмахсем тĕрĕс маррине, вĕсене клас тăшманĕсем сарса çӳренине пырса куракансем лайăх пĕлеççĕ. Вĕсем „Ирĕклĕх“ çирĕп пусăмсемпе малалла

кайнине лайăх тураççĕ, лайăх пĕлсе кайаççĕ, çитменлĕхсем пулсан, вĕсен çине кăтартса хăвараççĕ.

Мĕншĕн 100-шер çын таран колхоçнĕксем курма пыраççĕ?

Мĕншĕн 100-шерĕн çамрăксем-вĕренекенсем пырса кураççĕ?

Мĕншĕн Мускавран, Ленинкратран килеççĕ! Мĕншĕн ĕçхресҫен пырса курсан:

— Çакăн пек комун пулсан, епĕр колхоса пайанах кĕмелле, тесе кайаççĕши?

Мĕншĕн тесен, „Ирĕклĕх" Ҫăваш респуплĕкĕнҫи иккĕмĕш ватă та çирĕп комунă. Мĕншĕн тесен, комунăна куракансен кашниннех ҫĕрине ĕмĕр манми хаваслăх кĕрсе ларать. Хĕпĕртеттерет. Мĕншĕн тесен, комунă **10 çул** ĕнтĕ çирĕп, поҫшевикла çулпа пырать. Клас тăшманĕпе кĕрешет, клас тăшманне хĕрхенекенсене хĕрхенмест. Хăйĕн историнҫе нумай йăвăрлăх тӳснĕ, нумай тăшман сийенне курнă. Вĕсене кирлĕ вăхăтра хĕрӳллĕ, хастарлă ĕçпе ответленĕ. Темле йăвăрлăх пулсан та комуна йертсе пыракансем кайалла-майалла, тăвайратпăрши тесе шухăшламан. Тăватпăрах!

тенĕ йалан вĕсем. Хаљ ĕнтĕ колхоссем комунсем пĕрре мар, иккĕ мар, шутласа пĕтерес çук. Ĕçре вĕсем пĕр·пĕринђен сăнавсем, примерсем илсе пыраççĕ. Ку комунăн малтанах пример илмеллисем те пулман, терĕмĕр, анђах Комуниссен парттийĕ йертсе пыни „Ирĕклĕхри“ комуниссемшĕн кашни кунхи çимĕç пекех пулнă. Йăвăрлăхсем вăхăтĕнђе ыйăх килмен ђух парттисансем краштăн вăрçинђе ĕçхалăх хăй тăшманĕсемпе çапăçнисене, Переккопа йепле илнисене аса илсе, ђĕрисене хастарлатнă. Районти орканисатси те Йефимăвăн çитменлĕхĕ çине ђылай хут кăтартнă.—Йефимăвăн çитменлĕхĕсем нумайĕшĕ кăштах сыпкалас тĕлĕшпе пулса пынă, терĕ пире пĕр комунарĕ. Йефимăв вăл çитменлĕхсене пољшевикла тӳрлетнĕ, хăй ĕçлеме пултарнине малашне те çирĕппĕн ĕçре кăтартса пырĕ.

* * *

Хĕвел тухса „Ирĕклĕхĕн“ пĕђĕк, илемлĕ вăрманĕ урлă пĕтĕм кĕлĕткипех хавасланса курăна пуçласан, комунарсем шкул çумне пухăнђĕç. Ватти, вĕтти, йашши унта.

Ӑсату миттӗнкӗ. Пирӗн прикатӑна ӑсатаҫҫӗ.

— Ҫакӑн пек килсе, пире кӑтартусем панӑшӑн пирӗн ҫитменлӗхсене кӑтартса хӑварнӑшӑн тав тӑватпӑр. Хамӑр ҫитменлӗхсене хӑшђух хамӑрах асӑрхаймастпӑр та пулсассӑн кунӗн-ҫӗрӗн вӗресе тӑракан пурнӑҫра, айакран, тӗпри оркӑнсенђен килекенсем ђас курса вӗсем ҫине кӑтартса хӑвараҫҫӗ те, епӗр вӑл ҫитменлӗхсене тӳрлететпӗр...

Кӗрешӳ пӗтмен, клас кӗрешӗвӗ ҫивӗђ пынӑ вӑхӑтра пирӗн комуна пӗтерсе лартасшӑннисем халӗ те пур, клас тӑшманӗсенђен комуна кӗрсе кайасшӑннисем те пур, пирӗн йаланах ҫивӗђ класла сисӗмлӗ пулмалла. Пирӗн ҫитӗнӳсем йӑлтах партти орканисатси тӗрӗс, Ленинла йертсе пынипе пулса пыђӗҫ. Хаљхи вӑхӑтра пирӗн умри сатађ—комунӑна хуҫалӑх йенђен татах та ҫирӗплетесси пулса тӑрать. Ку халӗ пирӗн умра кашни кун тумалли ђи пысӑк ӗҫ,—терӗ Сороккӗн—комунӑри уђитлӗ хӑйӗн ӑсату сӑмахӗнђе.

— Мускава салам калӑр!

— Шупашкара салам калӑр!—тесе йулӆӗҫ хӗрарӑмсем комунарккӑсем.

— Сывă пултăр „Свобода“ коммунă!—терĕ Кроссмăн хĕрарăмсем йенелле кăшкăрса.

Комунаркăсем кулсах йаҫĕç.

Епĕр „Ирĕклĕхрен“ тухса „Сталин“ комун йенелле вĕçтертĕмĕр.

---

Послано в производство 14—XII—32 г.
Подписано к печати 7—II—33 г.
Редактор Н. Васянка.
Техредактор А. Демидов.

Уп. Чувашлита № 1544. Заказ № 1722. Тираж 5100 экз.

Ст. ф. б: 72×110 Об'ем 1,5 п. л. 57.000 п. з. в п. л.

Хакӗ 20 лус.
Цена 20 кол.

Х-1

В. Д. Дмитриев «Свобода»
очерк
для малограмотных

вашгосиздат
ебоксары